# КАПКĂН

НОЙАПĔРШĔН
21 №



## МĂН СУХАЛ.

Хăш-пĕр йалсенче, кулаксем хĕтĕртнипе çамрăксене суйласшăн мар, ватăраххисене суйласшăн.

— Ай йай, ес!.. „Капкăнăн“ 1-мĕш страницинчен кĕрсе ларнăçке.

— Сухалăма кăтартас тесе кĕрсе лартăм. Сухал мăннине кура тен пĕр-пĕр йалçыннисем пулăшком председателĕ туса хурĕç.

# КРАВУЛ! ХУТ ВĔРЕНТЕÇÇĔ.

I

Ăс-пуçĕ çавра çил пек çавăрăнаť, ђĕри çурăлса кайас пек аташаť. Ыран ирхи апатсем çинĕ хыççăн ликпункта каймалла. Хут вĕренме тытăнмалла. Çынăн ађи-пађи пур, ађи-пађи мар—арăмĕ те пур, çийĕнђен тата сухалĕ те кĕскех мар—хут вĕренме йараççĕ! Самани çавăн пек!..

II,

Урамра тапак хутаççи шыраса çӳрет тейĕр есĕр Ухливана курсан. Тапак хутаççи шырамасť. Ахаљ вăл пуçне уснă. Савăнăçлă шухăшсенђен пушанса йулнăран унăн пуçĕ усăннă. Ликпункт, ликпункт пуçа устараť!

Йалсовет тĕлне çитрĕ. Пӳртне кĕђĕ. Йалсовет çекреттарĕ çырса ларакан сĕтел умне ним шарламасăрах пырса тăрса ђарăнђĕ.

— Мĕн патне килтĕн?—тесе ыйтрĕ аллинђи руђкине пăрахса çекреттарĕ.

Ухливан, сĕтел умĕнђе тăрса шухăша кайнăскер, çекреттарĕн çинçе сассине илтмерĕ.

— Мĕн кирлĕ сана тетĕп!

— Мĕ-ĕн?—терĕ Ухливанĕ.

— Мĕн ĕçпе килтĕн тетĕп сана?

— Мĕн ĕçпе? Мĕн ĕçпе килнĕђĕ-ха епĕ?

— Пĕлместĕп çав, çавăнпа ыйтатăп.

— А-а! Аса илтĕм, терĕ Улихванĕ.—Аах! Пуç ыратаť. Сăмса шывĕ йухаť... Халер йерђĕ!.. Хут вĕренме каймалла. Каймасан йурамĕши? Халерпе ђирлемен пулсан... Халир йерђĕске... Арăм та хам пекех сывă мар—кĕнеке хутаççи çĕлесе пама йĕп те тытаймасť.

— Кĕнеке хутаççи нимех те марха... Халер... Халĕ кĕркунне халер пулма пултарати вара?.. Ђăнах халер йерђĕ пулсан, тухтăр патне кайса хут илсе килес пулаť. Вара сывалиђђен вĕренме çӳремесен те йураť. Сывалсан çӳрĕн.

Тухтăрĕ хутне парас çукки паллах.

Улихванĕ йалсовет патĕнђен тухрĕ, ĕçĕ тухмарĕ. Хут вĕренессинђен хăтăлаймарĕ. Иăвăр шухăшсем пусса илнипе Ухливан пуçĕ каллех тапак хутаççи шыранă ђухнехи пек усăнђĕ. Çанталăк татах тĕксĕмленђĕ. Ухливан киле утрĕ.

III.

Пĕр кун иртсен икĕмĕш кунне Ухливан хулана çитрĕ мĕшĕлтетсе. Халĕ ĕнтĕ сапаланса кайнă пуçĕнђе пĕр шухăшран икĕ шухăш пулса кайнă: хут вĕренессинђен хăтăлас шухăш та, ĕçлеме вырăн тупас шухăш. Çав пысăк шухăшсене йатса пĕр уђрештени алăкĕ витĕр кĕрсе кайаť Ухливан.

— Стурăша илместĕри?

— Илме йураť те... хут пĕлетниха есĕ?

— Хутне пĕлместĕп те...

— Хут пĕлместĕн пулин те... илĕпĕр еппин, тет пуçлăх. — Епĕ хам хут пĕлменлĕхе пĕтерекен йађейккă çекреттарĕ те, хĕлле ваљђи ĕç пулмасран харанађђĕ. Халĕ ĕнтĕ сана илсен ĕç тупăнаť. Иађейккăра 69 ђлен. 69-ĕш те харăс тытăнсан, пĕр самантрах санăн хут пĕлменлĕхе пĕтерсе хуратпăр.

Их, Ухливан!.. кăна илтсессĕн... тухрĕ тарђĕ уђрештенирен. Хулан пылђăклă урамĕ тăрăх йероплан пек вĕçтерђĕ йалалла. Ухливан ури айĕнђен сирпĕнекен пылђăк иртсе кайакан майрасене вăрçтартарнă, анђах Ухливан хăлхи вăрçнă сăмахсене илтмен,—Ухливанăн ĕмĕђĕ татăлнине сисен, хăлхи те хăйĕн параппан кантрине татса пăрахас тенĕ пулмалла—илтмест. Ара Ухливан хут вĕренме çӳресрен хăтăлас тесе, вырăн шырама тухнăђĕ. Вырăнĕ тупăнђĕ, анђах, кашкăртан таракан упана çулăхнă пек, 69 çын харăс ăна хут вĕрентме тытăнасшăн пулнă. Латнă тарса хăтăлђĕ.

Ех-хе-хей, Елексей ашшĕ Ухливан, хут вĕренмеллех пулаť пуљ сан!

IV.

Уф! тесе ђараннă Ухливан уйа тухсан. Сапаланнă шухăшĕсене пухнă та, урине тăханнă çăпатине каллех хула йенелле çавăрнă. Çăпати хуçи хушнине итленĕ—кайнă тĕрме патне çитиђђенех.

— Тĕрмене кĕрес тетĕп.

— Мĕн тума?

— Ларма.

— Мĕн айăп турăн?

— Туман та, тăвас тетĕп.

— Малтан ту, тумасăр илместпĕр.

— Лайăхи халĕ тĕрмере ларма?

— Лайăхне калама пĕлместĕп... Йусанасса—йусанатăн ĕнтĕ унта. Хут пĕлместĕн, пулсан, хут вĕрентеççĕ...

— Тĕрмере те хут вĕрентеççи?! Воспоти!.. Тур хăтартăрах!.. Апла пулсан кĕместĕп..

V.

У-у-у!—йĕрет Ухливан арăмĕ.

— У-у-у!—йĕреççĕ Ухливан ађисем.

— У-у-у! йĕрет Ухливанĕ хĕрĕ.

— У-у-у! уласа пырса тăтĕ кӳршĕ арăмĕ.

— Есĕ тата мĕншĕн йĕретĕн!

— Епĕ пĕлетĕпи? Есĕр йĕнине курсан... манăн та йĕрес килсе карĕ. У-у-у!..

. . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . .

Ухливан çар комиссариатне те уласах кĕрсе карĕ.

— Ма йĕрен?—тесе ыйтаççĕ комиссариатрисем.

— Салтака кайатăп. Илетĕри?

— Топроволљнă-и?

— Топроволљнă.

— Хăш çулта, хăш уйăхра çуралнă ес?

— Çулне калăп та, уйăхне калама пултараймастăп.

— Мĕншĕн.

— Хут пĕлместĕп.

— Хут пĕлменнисене салтакра вĕрентеççĕ. Унтан хăрамалли çук. Пит лайăх вĕрентеççĕ.

— Салтакра та-и?

Ниçта та хут вĕренессинђен хăтăлмалли çук. Кутамкка ăшне пытанас—кутамккине йатса кайаканни пулмĕ. Йатаканни тупăнĕ хăť... пĕрпĕр уђђитлĕ тупĕ те, килне йатса кайĕ, килĕнђе сана кутамккаран туртса кăларса, вăйпах хут вĕрентме тытăнĕ... Вĕренесех пулаť вара Ухливанăн!

VI.

Сĕм-сĕм вăрман, сĕм вăрман! Сĕм вăрман пайан лăпах, кашламасť, мĕншĕн тесен вăл хăйĕн ăшĕнђе хут вĕренесрен тарса çӳрекен теçерттира пытарнă. Мăн йуман хăвалĕ ăшĕнђе ерешмен пек кутланса лараť теçертирĕ. Пилĕк çăкăр ђикнĕ кутамкки Ухливан аллинђе, хăйне мĕншĕн кунта илсе килни çинђен пĕлесшĕн, пĕр хускалмасăр шухăша кайса лараť.

— Кӗрст!—тутарђӗҫ ҫывӑхрах кашкӑр вырӑнне ҫӑхан тытакан ухатниксем... пӑшалпа.
— Кӗрст!—пуҫне хӑвӑл мађђи ҫине перӗнтерсе сиксе тӑђӗ Ухливан.
Кӑшкӑрать:
— Хурах, хурах! Пӑшалпа персех хут вӗрентеҫҫӗ!.. Хурах, хурах! Ҫӑлӑрах! Хут вӗрентеҫҫӗ! Пӗтетӗп!
Йумахри арҫури сасси тейӗн вӑрмана ҫурса кайакан Ухливан сассине.
— Хурах! Хурах! Ҫӑлӑрах!

VII.

Пит киђем мӑн ҫын хурах кӑшкӑрни. Калама ҫук киђем. Киђемрен ӗнтӗ, «хурах»! тенӗ сасса илтсессӗн, Ухливанӑн тула тухса кайнӑ арӑмӗ пӳрте ђупса кӗнӗ, кӳршӗсем пуртӑ сенӗксем йатса пынӑ.
— Хурах!.. Хурах!.. — тесе кӑшкӑрса выртнӑ Ухливанӗ тӳшек ҫинђе.
— Мӗн пулнӑ?
— Тӗлӗк курнӑ.
Кунта каланисене пӗтӗмпех Ухливан тӗлӗкре курнӑ. Ах, мур! Епӗр ђӑн тесе! Хут вӗренме кайас килмен унӑн, ҫавӑнпа ҫак тӗлӗкпе аташса выртнӑ.
Тӗлӗк курни усӑллӑ пулнӑ. Халӗ вӑл хавасланса хут вӗренме карӗ. Тепӗр ирђен арӑмне кӗнеке хутаҫҫи ҫӗлеме хушнӑ. Тӑрӑшсах вӗренесшӗн. Вӗренсе тухсан „Капкӑн“ ҫырӑнса илме шухӑшлать. Маттур!..

Йаван-Муђи.

## Урмарла самокриттӗккӑ.

**Урмарта ӗҫлекенсем самокриттӗккӑпа аппарата тасатас ӗҫсенђе кайа тӑрса йуласшӑн мар. Питӗ тӑрӑшса ӗҫлеҫҫӗ.**

**Районри халӑх суђӗ пӗр Иурйӗв текенскерне айӑпланӑ пулнӑ. Унӑн арӑмӗ 8 ҫуллӑх шкулта ђӑваш ђӗлхи вӗрентет. РӖК-ре ӗлекенсене самокриттӗккӑ сӑмахӗ ҫӑварах пырса ўкрӗ.**

...М. Кириллова, как жена разложившегося мужа (Юрьева) переводится из 8-летки в 1 ступень“...

**туса хураҫҫӗ. Локӗкки аванҫке. „Как жена мужа“ куҫать. 8-леткӑра „разложившегося мужа“ арӑмӗ вӗретме пултараймасть (унта шкул пуҫлӑхӗ те, контрођ те пур), 1-мӗш сыпӑк шкулӗнђе пултарать. Укта контрођорсем ҫук.**

**Халӗ Ђӑваш аслӑ суђӗ Урмарти халӑх ӗҫне тепӗр майлӑ пӑхса тухнӑ, Иурйӗв айӑплӑхне сўнӗ.**

**РӖК-ре М. Кириллӑвӑ пирки самокриттӗке кутӑнла тӑратмалла мар-ши.**

□◆□

**Аласталӑх ўсет. Ђӑпта ҫапакансен хисепӗ ўсет. Вӑрмар районӗнђи Турикас Тушкил йалсоведӗн ревиҫи комиҫҫи те ђӑпта ҫапма тытӑннӑ. Вӑл ҫапакан ђӑпта сурђӗсене „ыйӑх ђӑпти“ теҫҫӗ. «Ыйӑх ђӑптисем» нумайрах ҫапма тӑрӑшнипе, ревиҫи комиҫҫи хӑйне суйланӑранпа йалӗҫтӑвком ӗҫӗсене пӗре те тӗрӗслесе пӑхайман. Ыйӑх ђӑптисене мӗн ђула сутни паллӑ мар.**

# НАЛОК УПРАВЛЕНИЙӖНЂЕ

**Финанс комиссарнађӗн кулаксем ҫине уйрӑмӑн хумалли налока Ђӑваш республӗкӗнђе миҫе хуҫалӑхран, тата мӗн ђухлӗ илмелпине кӑтартакан ђыхвӑрсем койапӗрӗн 1-мӗшӗ иртнӗ хыҫҫӑн та пулман.**




**— Ђӑваш республӗкӗнђе миҫе кулакла хуҫалӑх шутланать?**
**— Пӗлместпӗр, мӗншӗн тесен районсем ҫветӗнисем тӑратаймарӗҫ.**
**— Районсем ма тӑратман?**
**— Йалсоветсем тӑратман.**
**— Йалсоветсем ма тӑратман?**
**— Кулаксем тӑратман.**

# Тарăхмалли йăнăш.

...Йалсоветне суйлама Кĕсрекассинђе питĕ тĕплĕн хатĕрленђĕҫ. Вĕҫĕ-хĕррисĕр пухусем, ларусем туса иртерсе, пĕр ҫулталăк хушшинђе йалсоветђĕ мĕн-мĕн ĕҫлесене тавăрсах сиплерĕҫ темелле: пĕр йăнăш та ҫук. Пур ĕҫсене те тăрăшса, тĕплĕн туса пынă иккен. Кутăн-пуҫăн ҫавăркаласан та кăлтăк тупăнмарĕ. Комсомолĕссем те хытă хĕпĕртерĕҫ, вĕсем хăйсем хушшинђен суйлама сĕннĕ претҫетаттĕлпе ҫ е к р е т т а р йађейккă йатне ҫĕртмен... Маттур ађасем!

Урлă-пирлĕ ҫакăн пек сăмахсем те илтĕнкелепĕ: Пеťкапа Ваңкка каллех советра пулмалла, мĕншĕн тесен кăҫалхи пек пĕр совет та ĕҫлемен...

— Суйлас ҫавсенех...

— Ҫамрăк, вăй ҫитмелле, вĕреннĕскерсем...

— Ĕҫлеђђĕр халăхшăн!

2.

...Хуллене х суйлав кунĕ сăмса ҫине ҫитсе тăрăнђĕ. Вара кас, хăйăсем ҫутсан, шкулта суйлав пуххи пулмалла ĕнтĕ. Ҫамрăксем хăйсем хушшинђе ҫирĕп йышăннă.

— Пеťкапа Ваңкканах суйламалла.

Урам хушшинђе пĕр-пĕрне хирĕҫ пулакан кĕреҫе сухаллисем те хăйсем хушшинђе ҫаплалла калаҫнă:

— Ес мĕнле?

— Мĕн мĕнле?

— Совета кама суйлас тетĕн?

— Пеťкапа Ваңканах ĕнтĕ... Есĕ тата?

— Епĕ те...

Пĕр сăмахпа, ҫирĕмĕш хут калатăп викак, Пеťкапа Ваңкка, хастарлăран та вунă хут хастарлă комсомолĕссем, йалсоветпе суйланасси ҫап-ҫут курăнса тăва. (Ђанах... пытарас мар, пытарсан хама сылтăм сулăнђакçă тейĕҫ... Иалти арман хуҫисемпе вĕсен лармалли вырăнĕсене ҫуллакансем, сăмакунҫăсем ђикĕсĕр тарăхвă йалсоветпе каллех кăмсамулсем лекессине сассан, анђах... вĕсем пирĕншĕн мĕн? Шăлĕсене шайтан пек кађăрттарсан та—ҫăвар туллин плеваť!..)

Ҫапла ĕнтĕ... Касхине шкулта ҫĕнĕ йалсовет суйламалла пулнă, унђђен пĕр пĕр пилĕк сехет малтанрах...

3.

...Шăп кăнтăрлахи апатсем авăртма ларнă вăхăтра, йалăн ту вĕҫĕнђен аналалла пĕр хĕрарăм хуйнă йыха пек вĕҫтерсе анса карĕ. Хурал пӳрђĕ тĕлне ҫитсен такăнса ӳксе, вăл виҫĕ хутђен кăлтăрик пек ҫаврăнса илђĕ, унтан каллех сиксе тăрса ђупма тытăнђĕ. Мăн ҫăл патĕнђен иртнĕ ђухне тата тепре татăлса анса, тамиҫе ђалăш тăрăшшĕ ҫурăмпа йарăнса карĕ... Итго ҫавах та ăнтрамарĕ шелмăскер, каллех сиксе тăрса, копператтив лапкине палт! ҫитсе кĕрсе тăђĕ.

Ку ухмаха йернĕ йапаларан лапкари ҫынсем трук хăраса кайнипе ђутах йĕмĕсене вараласа пĕтермерĕҫ, арăмсене вађђи пулатђĕ ĕҫ!

Лешĕ хăйĕн ҫинђи йура кăштах силлесе, тутăр айĕнђен хĕрлĕ сăмса курăнсан ҫеҫ хăрама кирлĕ марри палăрђĕ... Урамсемпе вĕҫсе пынă хĕрарăм сăмакун суттипех виҫĕ хĕрĕ вађђи хулăм тӳшексем тунă Крахвине пулнă...

Лапкарисем ăна, тарăхса кайнипе, ђутах тытса кисеђђĕҫ, анђах Крахвине... станоклă пулемет пек сăмахсемпе ҫапма пуҫларĕ...

— Ђорт халăхĕ! Халăх мар есĕр — тăм кисменсем! Мĕн ман ҫине упăте ҫине пăхнă пек пăхаттăр?! Ахађ ђухне есĕр... пролеттари...

Прикашђĕк прилавкă урлă упа пек сиксе касрĕ.

— Пăкоти-ха есĕ, ват сăс... Ђерес мĕншĕн е усал сăмахсемпе вăрҫатăн пролеттари лапкинђе? Лап саншăн ђирхӳ мар вĕт!.. Ђирхӳре есĕр пĕр-пĕрин ҫӳртасем варланăшăн пĕркунне ҫӳҫр н ҫӳҫе тытса вăр нă тет!..

Крахвине кăштах кайалла ђакса тăђĕ те, х ҫиве нийепле те ҫырма йураман сăмахсемпе лапла тарса хуђĕ. Прикашђĕк ăна уншăн лапкаран кăлар пеме тăђĕ, анђах халăх ђарђĕ.

— Тăхта, Микихвер... Темскер каласшăн пулма ла вăл...

— Конешнă, каласшăн!—сухăрса йађĕ Крахвив —Сиршĕн тăрăшатăп...

— Мĕн? Кала еппин ђасрах!

Крахвине пуҫне ăйăр пек ҫӳлелле ҫĕклесе тăђ

— Есĕр Совета каллех Пеťкапа Ваңккана су ласшăн теҫҫĕ-иха?

— Ну, вара... терĕ тахшия.

— Мĕн.. Вĕсене... ырă ҫын тетри ха есĕр вĕс ве? Е?

— Унашкал ĕҫлекенсем пулман-ха...

Крахвине мăптăр хырăмне хыпаласа ахăрма та ратса йађĕ...

— Ех, тăмкисменсем!.. Куҫ ăҫта сирĕн, хĕвре-и Ха-ха-ха!.. Ха-ха-ха!.. Ҫитђас, айăр-ха шкула... Кур Пеťкапа Ваңкка мĕн хăтланаҫҫĕ... Курăр!.. Айăр т тĕп! Ђасрах!..

Упăте пек сиксе тухса карĕ Крахвине лапкар Ун хыҫҫăн — лапкари пĕтĕм халăх шкулалла тух ђупрĕҫ. Прикашђĕк те, лапкине питĕрме мансах, в рăм сăкман аркисене пуҫтаркаласа вĕҫтерђĕ...

4.

Крахвине шкул алăкĕ умне никамран малтан ҫ се тăђĕ.

— Шăп! Хуллен! Пĕр сасан пултăр! Килĕр ку тарах... Шăп... Итлĕр ĕнтĕ...

Лапкаран ђупса пынисем шăп пулђĕҫ. Шалт Ваңкка сасси илтĕнет:

— Иурĕ, йурĕ сволăђсем!.. У-у, шайттан ком молĕссем! Пĕтерђĕҫ мана, пĕтерђĕҫ! Пăкоти еп вĕсе пĕрерĕн вĕлерсе пĕтеретĕп ак... Китайпа вăрҫă пу лантăр!.. Хам алăпа вĕлеретĕп!.. Вĕлере-е е-п!

Унтан—Пеťка сасси илтĕнме пуҫларĕ:

— Комуниссем мана етемрен уйăрђĕҫ! Вĕсем ђи кĕве хупрĕҫ, халăх тырă пами пулђĕ... Ех, ирĕк па сан, епĕ те хам алăпах пăвса пĕтерĕттĕм вĕсене Пурр рве те-е!..

...Алăк патĕнђе итлесе тăракансем тĕлĕкне шанк!.. хытнă...

— Вăт тăк йапала...

— Ну и сво... ну и сволăђсем!

— Иккĕшĕ те ӳсĕр!

— Совета кĕретпĕр тесе ĕҫнĕ ĕнтĕ..

— Факт!..

— Тавай, уҫса кĕретпĕр!

— Питĕрсе ларнă...

— Шакка хытăрах!.

Пурте алăкран шаккама тытăнђĕҫ...

— Ей, уҫăр, сволăђсем!

— Шывă уҫăр тенĕ!

Ҫук, уҫмаҫҫĕ... Алăк патĕнђисем тарăхса ҫитрĕ мĕнпур вăйпа шаккаҫҫĕ... Темле шаккасан та уҫма пирки, пурĕ трук тĕксе, шкул алăкне пĕррех аркат купипе кĕрсе тăђĕҫ.

...Парттăсем ҫине хăмасем сарса стсенă тун

Стсенӑ çинҭе Пеťкапа Вађкка, пулаз прэтçетаттӗлпе çекреттар тӑраççӗ... Пеťка шӑлне çыртса алӑк çӗмӗрсе кӗнисем çине пӑхса тӑркаларӗ те, Крахвинен кӑшман певӗр питӗнҭен тӳрех аллинҭи кӗнекепе йарапаҭӗ.

— Ђоргсем!... Реппеттитси тума та канӑç памасҭӑр... Пӗлмесгӗр штолӗ каçхине хӑвӑрах çпектаккӑђ партса памалла вӗт!.. Пшол, ан кансӗрленӗ пултӑр реппеттитси тума!

...Алӑк çӗмӗрекенсем, урама тухсан, Крахвинене кытах ислетнӗ вара шкул алӑкне пустуй çӗмӗрттернӗпӗн...

Леонит Акаккӑв.

Пленӑма ђӗнекен 320 васкавлӑ повесткӑсем пуштӑра 26 кун выртнӑ.



— Васкавлӑ повесткӑсене ма вӑкӑтра кӑларса йамарӑр? Повесткӑсем çитеймен пирки телекатсем те пленӑма çитеймерӗç.

— Ма повесткисене çулталӑк малтанрах саламарӑр? Вара лапах çитеђђӗç. Ех!.. пӗлместӗр çав ӗçлеме!..

# 9 така пуçлӑх Мӗкӗте

Мӗкӗте вӑл вӑл 9 така... йал пуçлӑхӗ. Кукӑр сӑмса Мӗкӗти теççӗ ӑна... Кукӑр сӑмса Мӗкӗти пулсан та... пултаракан çын.

— Е-е-ех çав пирӗн, Кукӑр сӑмса Мӗкӗти пултараť те пултараť шелмӑ, теççӗ йалти хӑш-пӗр çынсем.

Ђӑнахах та пултараť, ӗнтӗ Мӗкӗте. Иалпуçлӑхӗ пулиҭҭен пулӑшкомра ӗçлерӗ те.. Унта та пултарҭӗ— хӑй пурине тултарҭӗ. Ун ҭухне вӑл массӑ вырӑнне хӑйпе çыхӑнса ӗçлерӗ. Хӑй тӗллӗн, еппин, ӗçлерӗ.

Халӗ ун пек мар. Кукӑр сӑмса Мӗкӗти халӗ леш массӑпа таҭӑ çыхӑнса ӗçлет. Массӑ сӑмаххинҭен пӗре те айаккалла пӑрӑнмасť. Мӗкӗте пур ӗçре те тӑрӑшса ӗçлет те...

Хӑй „малта пыракан“ хресҭен майӗпе, тырпул тухӑçне, акмалли çӗр шутне ӳстерес тӗлӗшпе пит вирлӗ ӗçлет, анҭах халӑхӑнне мар, хӑйӗнне.

Кукӑр сӑмса Мӗкӗтин пӗр халӑх пуххи те тырпул тухӑçне, акмалли çӗр шитне ӳстересси çинҭен каламасӑр иртмест. Пӗрре халӑх пуххинҭе Мӗкӗте: акмалли çӗр тухӑçне ӳстерес майпа Сахваң леш йенҭи халӑх çӗрне тара парасси çинҭен „вопрос“ пуçарса йаҭӗ.

Мӗкӗте сӑмахне пурте лайӑх итлеççӗ. Итлемесӗр ара, йал пуçлӑхӗ вӗт! Пӗлекен çын.

— Сахван леш йенҭи çӗрсене мӗн тӑвас тетӗр, тет ҭейе Кушак Кӗркури.

— Мӗн тумалла? Хура Макçӑм илес тет, вӑл тӗлӗшпе, вӑл ман пата, епӗ райӗçтӑвкома тырӑ пул тухӑçне тата акмалли çӗр шутне мӗн ҭул ӳстерни çинҭен çветӗни çырнӑ ҭух пырса йумахларӗ, тет Мӗкӗте.

— Пулӑшком çине илсе йулас. Килес çуркунне тӗрлӗ курӑк вӑррисем акса «акроминимума» пурнӑçа кӗртер, тет Паљукка Еххӗмӗ.

— Çук, май килес çук. Кун пек тусан ӗç тухмасť, ку ӗçре массӑна нумай ҭӑрмантармалла пулаť. Халӗ массӑ тырпул тухӑçне ӳстерес тӗлӗшпе тапаçланаť, массӑна хӗрхенмелле, тесе ответлерӗ Мӗкӗте.

Мӗкӗте тӗрӗс калаť. Пулӑшкома та ку ӗçпе ҭӑрмантармалли çук, тег ҭӑпта хуçи Иашурӗн.

Сасӑлаççӗ.

«Подђшинство» сасӑ илнӗ тӑрӑх, Сахван йенҭи 2 кектар халӑх çӗрӗ Хура Макçӑм çине йулаť. Пулӑшкома ку ӗçпе ҭӑрмантармалла тумарӗç.

Çекреттар çыраť.

— Кам мӗн калас тег?

— Мӗн каламалли пур. Макçӑмах йултӑр.

Авҭах, кӑшт ахађ выртакан çӗре вырнаçтарнӑшӑн „лешнеҭҭӗ“, тет Кушак Кӗркури. Кунта епӗр нумайӑн мар пулин те, „çӗнтерӗпӗрха“ „лешне“... массӑсӑрах... массӑна ҭӑрмантарар мар.

Мӗкӗте Макçӑм çинелле пӑхса: Ну, Макçӑм, есӗ мӗн калатӑн Кӗркури сӑмаххине хирӗç, тег.

— Мӗн каламалли... «Лешех» мар... Килте тумлатни... тата ҭан виттӗр йухтарни пулас пулаť, терӗ пӑшӑлтатса.

— Массӑ сывлӑхӗшӗн йанклаттарӑпӑр!..

Еç ӑнаçлӑ пыраť. Акмалли çӗре хура выртармаççӗ. Массӑна та ҭӑрмантармаççӗ. Мӗкӗте сӑмса тӑрӑх йухиҭҭен каланӑ токлат харама каймарӗ.

Çапла хастарлӑ йалпуçлӑхӗ Мӗкӗте массӑпа çыхӑнса тырпул тухӑçне ӳстерҭӗ.

Р. Шашков.

# Икконӑсен хапрӑкӗн хуҫи

Никкантрӑҭӑн, калас пулай, питӗ православнӑй характӗр пулнӑ. Анҭах вӑл хӑй вӑхӑтӗнҭе кӑна. Халӗ унӑн вӑл характӗр ҫухалнӑ. Мӗншӗн? Пӗр сӑмах—икконсене пула.

Выҫлӑх ҫул питӗ нумай иккон улӑштарнӑ. Килет ун патне мӗнле те пулин палламан ҫын хуларан:

— Страҫтӗ... апла капла... Ҫӑнӑх ҫук-ши сирӗн, йе виркӗрпи... еппин?

Никкантрӑҭӑн вӑл вӑхӑтра малтанхи сӑмахӗ ҫакӑ пулнӑ:

— Турра ӗненекенскер-и?

Пиллен вӑл турра ӗненекенсене, лирики (тӗн) ҫине ӑшшӑн пӑхакансене.

— Турра ӗненекен ҫын пулсан—тупса паратӑп.

Супӑлтеткелеҭҭӗҫ хушӑран хӑшпӗрисем:

— Иепле-ха, ырӑ ҫыннӑм, тӗнсӗр пурӑнма пултӑр? Лирикишӗн епӗр пӗтӗм икӗ алӑпах сасӑлатпӑр.

— А, ну, хӗресне кӑтарт... Унта вара ниҫта тытӑнма ҫук. Ыйтаканни хӗвӗнҭе ухтаркалай, хӑйӗн типшӗм ӳтне хыпашлакалай те:—Ҫук,—тет,—хӗрес алла кӗмерӗ... ӑҫта ҫухалнӑ пулӗ-ха нимӗнсӗрех вӑл? Тухса кайай вара ыйтаканӗ. Ӗненекенсене вӑл хавассӑнах йышӑнай. Питӗ нумай иккон улӑштарса тултарҭӗ Никкантрӑҭ, пӗтӗм пӳртне ҫапмаллӑх пухрӗ. Лӑпкӑ, тутӑ ҫулсем ҫитсен—икконсем кӑмӑла пӑтратма тытӑнҭӗҫ, унӑн вӗсене сутасси килҭӗ. Ҫпеккуҭатси тавас шутпа мар, турра йурӑхлӑ пулас ӗмӗтпе.

Ласар пысӑк пирӗн салара. Кӑларса тӑратрӗ те Никкантрӑҭ тӗрлӗрен ҫветтуйсен сӑнӗсене, кӗгме тытӑнҭӗ. Капӑрланса ҫӳрет халӑх, анҭах икконсем ҫине куҫпа та пӑхаканӗ ҫук.

Аранах темӗнле палламан ҫын п ы р с а тӑҭӗ. Хӗпӗртерӗ Никкантрӑҭ, ӑна сӑмсинҭенех тӗртсе парай Никколай укотнӗк сӑнне:

— Акӑ, хаклӑ ҫыннӑм, иккон. Никколай укотнӗк кӑна мар вӑл, пӗтӗм—анкӗл темелле!

Лешӗ пӑкмаст те.

— Епӗ,-тет,—ырӑн укҫи пухасси пирки калаҫатӑп, санӑн икконсен сӗрӗмӗ ҫинҭен мар... Тытӑнҭӗ хайхискер кӑпитантси кӗнеки ӑшӗнҭе темӗн тустарма.

Никантрӑҭ кӳренҭӗ.

— Мӗн пирки-ха, хаклӑ ҫыннӑм, есӗ манран укҫа ыйтатӑн. Епӗ ҫӑнӑхпа сутӑ тумастӑп вӗт, икконсемпе... Ҫимеҫҫӗҫке вӗсене.

— Унпа мӗн туни пире кирлӗ мар,—тавӑрҭӗ укҫа пухаканни,—анҭах саккун тӑрӑх тивӗҫлӗ ырӑн укҫине хӑвӑртрах кӑларса пар. Иулашки укҫинех кӑларса памалла пулҭӗ Никкантрӑҭӑн.

Кӗтет-кӗтет Никкантрӑҭ, анҭах илекенсем тупӑнмаҫҫӗ. Паллах, тупӑнас ҫук, икконсем ҫитсӑ тавраш мар.

Пӗр ҫап-ҫамрӑк арӑма тытса ҭарҭӗ Никкантрӑҭ. Куҫӗсем унӑн ытла та ӗненҭӗклӗ пек туйӑнҭӗҫ:

— Ил-ха пӗр икконне, кинӗм, турра савӑнтар ха пӗрре.

Лешӗ кулса ҫеҫ тӑрай:

— Епӗ телекаткӑ, тет,—хам икконсене те тахҫавах сӑмаварта ҫунтарса йатӑм. Кӗлеткесене пуҫҫапас йӑла ҫук манӑн.

Пӗтӗм вӗҭӗрхенсе ҫитнӗ Никантрӑҭ хӑйӗн икконӗсене пуҫтарма тытӑнҭӗ. Ҫилли-каҭкипе кӗҫех кирлӗ мар сӑмахсемпе йатлаҫмарӗ: «кайаннисем!..».

Пӗр укотнӗкӗн сӑмси ҫинҭи краски висгенсе ӳкрӗ. Никантрӑҭшӑн вӑл темшӗн кӑмӑллӑн туйӑнса каймарӗ. Тӗрӗссипех каласан, икконсем Никкантрӑҭӑнне шалт тинкине кӑларҭӗҫ. Унӑн православнӑй характӗрне шӑлтах пӑтратса йаҭӗҫ.

Арӑмӗ ӑна ӑшшӑнах йышӑнҭӗ:

— Ну, йепле, сутрӑни? Миҫе кайрӗ?

Никкантрӑҭӑн шӑлӗсем шатӑртатаҫҫӗ:

— Сутрӑм ҭасрах сана ваҭҭи... Хӑвӑн кӑсйуна тавӑрса силле. Акӑ йепле сутӑнаҫҫӗ вӑл... Никкантрӑҭ кунта пӗр сӑмах персе йаҭӗ те, кӗтесре ҫакансӑ тӑракан турамӑшӗ вӑтанни́пе хӗрелсе кайрӗ. Никкантрӑҭӑн хайӗн сӑмахех:

— Кам илтӗр вӑл кирлӗ мар навуса!

Купӑста йашки ҫинӗ ҭух Никантрӑҭ пуҫларӗ:

— Пӗҭӗк аҭасем „иккон фаприкинҭӗ"—тесе тӑракламa тытӑнҭӗҫ. Ватлӑхри кунӑмсенҭе ҫакна курмала пултӑм...

Ӗҫ ӑнмарӗ Никкантрӑҭӑн. Ҫаплах ҫырма йурай.

Кӗтсе илӗ вӑл тепӗр пасара. Кайаллах ҫынсем айакран ҫеҫ иртсе кайаҫҫӗ. Кайаллах ырӑн укҫи тӳлемелле пулҭӗ. Мӑшкӑл!

Никкантрӑҭ карҭӑк-кӗрҭӗксем йеннелле ытларах пӑхма тытӑнҭӗ. Иртсе пырай мӗнле те пулин вилӗ шӑршӑ ҫапнӑ карҭӑк, Никкантрӑҭ ӑна паллӑ йӑпатуллӑ сӑмахсемпе ҫавӑрттарма тытӑнай:

— Акӑ, кунта йӳнӗ иккон пур. Ана йут патшалӑхсенҭи маҫтӑрсем тунӑ. Сӑмахран, Никколай-укотнӗкене пӑх: йӳнни те йӳнӗ, ватти те ватӑ мар. Хӑшӗ-пӗрисем хӑйсем укҫаҫ-суккӑр пирки ҫеҫ айакран иртсе кайаҫҫӗ. Теприсем ҭарӑнаҫҫӗ те самокриттӗкпе муталашаҫҫӗ: ӑҫта унӑн укотнӗк сӑнӗ... хӗрлӗ крыс... платник сӑнӗ пур!

Иимеҫҫӗ иккона.

Хӑйӗн шӑпи ҫине ҫав тери кӳренҭӗ Никкантрӑҭ. Хӑйӗн пӗр йӑванкаласа выртакан икконне ыйткалакана халалама та пулҭӗ, анҭах лешӗ илмест:

— Мӗн тума кирлӗ вӑл мана?

Хутаҫа ҭикес—лишни волокиттӑ. Ҫитменни ҫине вӑрлана тесе шухӑшлӗҫ тата.

Кӗтмен ҫӗртенех ҫылӑха кӗҭӗ Никкантрӑҭ:

— Ех, йепе сӑмса! Вӑрланӑ... Кам вӑрлатӑр вӗсене, кама кирлӗ халӗ вӗсем?

— Во... во... Епӗ те ҫавнах калатӑп ҫав, ҭӑнахах та никама та кирлӗ мар.

Сапаланса кайрӗ Никкантрӑҭ, хӗрлӗ кӑшман пек хӗрелсе кайрӗ. Ҫатах та ыйтрӗ:

— Пӗлейместӗн-ши есӗ, хаклӑ ҫыннӑм, ӑҫта икконсем илекенсем пуррине?

— Аҫтан пӗлес? Епӗр кунисем мар,—терӗ те ыйткалакан, ҫавӑрӑнса тӑҭӗ.—Муҫҫейсенҭе илеҫҫӗ, теҫҫӗ. Хулана кайас пулай санӑн. Тен унга вырнаҫтарӗҫ. Унта ҫӳп-ҫапҫӑран та тӗлӗнеҫҫӗ, теҫҫӗ...

Икӗ кунтан Никкантрӑҭ хулана тухса утрӗ. Аран-аран шыраса тупрӗ хайхи муҫейе. Икконсемпе тултарнӑ михӗсене йатса тӳрех аслӑ кӑпинетне ҫиҫтерсе кӗрсе кайрӗ:

— Акӑ илсе килтӗм. Илӗр ӗнтӗ! Иӳнех паратӑп.

Асли, кунешнӑ, шӑлтах ӑнран кайрӗ:

— Мӗнле апат-ҫимӗҫ илсе килтӗн-ха?—тет.

Никкантрӑҭ икконӗсене кӑларҭӗ:

— Апат-ҫимӗҫ мар, акӑ мӗн илсе килтӗм...

— Епӗр ун пек хӑлтӑр халтӑра илместпӗр, укҫа ҫук, терӗ пуҫлӑх. Унтан Никкантрӑҭпа интересленсе:

— Есӗр мӗн, аттеист*) пулаттӑр-им? тесе ыйтрӗ.

— Ҫук,—тет Никкантрӑҭ,—епӗр йалтан, йалт

*) Аттеист турра ӗненмен ҫын.

# Ђăваш ăратлă ĕни!

Хăш-пĕр ђăваш ĕнисем çу тумаллăх та сĕт параймаççĕ... Çувĕ хаклă.



— Ăçта есĕ капла? Иулашки ĕнÿнах сутма кайатăни?
— Сутмалла пулђĕ. Çу илме укçа тăваймарăм.

## ХУПĂ ÇЫРУ ПИРКИ.

Нумай пулмасть прокурорăн Аслă Патăрйел районĕнђи помошнĕкĕ, пĕр хупă çыру илђĕ. Çырăва илсевех Атăмпай пуçлăхĕпе пăшăлтатса илђĕç те, пĕр милитсионера парса Нĕркеçри Ваçлей салтак кĕлетне пиђетлесе хуђĕç.

Иалти йатлă çыннсем каланă тăрăх, Ваçлей салтак çакăн пек „вăтам" хресђев: 2 лаша, 2 ĕне, 2 сысна, тата ытти вылђăх; кăçал Елпеç çĕрне 10 çурпилĕк ыраш акса илнĕ, йатак çĕрне 6 çурпилĕк ыраш, 6 çурпилĕк çуртри; çĕнçĕре кайнă Çтаппанăнне 5 çурпилĕк ыраш, 5 çурпилĕк çуртри акса вырса илнĕ. Кусемсĕр пуçне Елпеç çĕрĕнђе тахшинĕнне пĕр çурпилĕк вăрттăн вырса илнĕ. Çапла ĕнтĕ Ваçлей салтак кăçал 22 çурпилĕк (7 теçеттин ытла) ыраш, 4 теçеттина йахăн çуртри хиртен кĕртнĕ. Кашни çурпилĕкре 3-шер урапа кăна лартăр. Çавăнпа та унăн кăçал 5 капан ырашра 70 урапаран кайа пулман. Кун çумне 30-40 урапа çуртри хурас.

Ку—вăтам хресђен ђухлĕ акни пулђĕ ĕнтĕ.

Вăтам хресђен хăй ĕçне хăйех ĕçлет, тытас пулсан та вăл ђикĕсĕр кирлĕ вăхăтра çеç пĕрер кунлăха тара тытса ĕçлеттерет. Ваçлей çаплан?

Кун çинђен йал çыннисем çапла калаççĕ:

— Пĕтĕм йал ђукăнне кумма туса пĕтернĕ те, çаратать те çаратать, теççĕ.

Ђăнах та, Мулла Ахванисĕ ун куммăш,—ун ĕçне ĕçлесех ураланаймасть; Икĕпин Микуринĕ ун куммăшђĕ ун ĕçне ĕçле-ĕçлех çука йулса выçă вилђĕ; Ђĕкĕнтĕр Елекçейĕ те Ваçлей куммăшĕ,—Ваçлей ĕçне тÿсеймесĕрех Çĕпĕре тарђĕ; Упа Сахарне халтерех кумма тунă. Сахар нихçан та Ваçлей ĕçĕнђен пушанаймасть; Татмăш хирĕнђен тара илсе акма лайăх пултăр тесе, Суккăр Каварле арăмне Наçтука кумма турĕ, т. ыт. те. Тырă вырнă ђух, ун ани çинђе хăш те пулин куммăшĕ ђакаланать; улма кăларнă çĕрте те куммăшĕ, ыраш çапнă ђухне те куммăшĕ, пур ĕçре те кумма ĕçлет унăн. Пĕр кăкшăм пăнтăхнă уйран парать те, йара куна ун ĕçне ĕçлеççĕ вара „йуратнă куммăшĕсем"

Вăтам хресђен çапла хăтланать ĕнтĕ.

М. Иванов çаксем çинђен светĕнисем пуçтађрĕ те, проккурор помошнĕкĕ патне çапла çырса йађĕ.

„... Çапла çапла, Нĕркĕçри Ваçлей салтакăн йепле те 900 пăт йахăн тырри пур. Анђах ун çине 75 пăт кăна хунă"...—тесе шурă хут хуратрĕ.

Кĕлете питĕрсе кайсан тепĕр ернерен Ваçлей патне Çмирнов милитсионер килђĕ. Аллинђе М. Иванов çырăвĕ. Кĕлет алăкне уçрĕ те, Çмирнов сылтăм сулăнђăка сулăнса карĕ:

— Кунта 150 пăтран ытла пулмасть, терĕ.

Акт çырђĕ.

Ваçлей хăй ăшĕнђе Çмирнова:

— Ухмах! Унта çĕраллă пăт кăнаи? Тăватă çĕр пăт ытла унта манăн ыраш, патуй!—терĕ.

Çуртрине шутламарĕç.

Çĕраллă тăк çĕраллă. Анђах, кам çырнăха кăна? М. Иванов,—тенĕ... Самсун Матвийĕ мари? Çавă—Матви Иванух вĕт!

Матвийе ђĕнсе алпустарса пăхрĕç, çук—Матви алпусма та аран-аран кăна.

Матви алли килмен пирки Ваçлей çемйипе Çмирнов Наçтаççи Павăлĕ çине кайса хуђĕç:

— Путь кăна Павăл тунă, терĕç.

Павăл Ваçлейĕн пĕр çурпилĕкне йунăш акнă. Ваçлейĕ кайать те, хăй паллине туса хурать. Кайран вырса та илет. Павăл кайран вăрлăхне ыйтать, анђах Ваçлей Павăла нимĕн те паман. Çавăншăн çилленнĕ пирки Павăл Ваçлейе: „асăнтарăпха сана"—тенĕ.

— Асăнтарђĕ ĕнтĕ... Хăй çыру пĕлмеç... Љамун Елекçейне çыртарнă ĕнтĕ вăл, шайттан!—терĕç.

Çапла туса хĕварђĕ Çмирнов милитсионер. Ăна районри уђрештенисем те ĕненђĕç. Проккурор помошнĕкĕ М. Иванов хуђĕ çине хĕрлĕ ђернилпа „прекратит" тесе çырса хуђĕ пуђ. Ваçлей те 400-450 пăт тÿлес вырăнне 75 пăтпа хăтăлса йулђĕ.

„Пĕтĕм ытлашши тырра патшалăх алline" тенĕ лосăнк шупкаланса çеç йулђĕ.

М. Иванов.

---

хресђен...

Туйса илђĕ те асли, калать:

— Çук,—тет,—илейместпĕр.

Тытăнђĕ Никкантрăђ тархаслама:

— Пушалстă илĕр, ахалех парам еппин йулашкинђен. Тарăхтарса çитерђĕç вĕсем мана. Мĕнле „иккон фаприканђĕ" пултăр манран, манăн çÿççем те кăвакарнă ĕнтĕ...

Çавăн хыççăн илсе йулђĕç вара унăн икковĕсене. Ăçта хунă вĕсене—епĕ пĕлместĕп. Тен ђăланта çĕрсе выртаççĕ пуђ, тен ăçта та пулин витринă çинђе çакăнса тăраççĕ.

Вăл пирĕншĕн паллă мар.

Вас. Ђиккунов.

# ЙĔПЛĔ ÇĂМАХ ХЫПАКАНСЕМ

## Кăçал сахалтарах.

Пĕлтăр кирĕн Совет Сойусĕнђе пĕрђĕлĕ тырăсем кĕтĕмпе 3,608,000,000 тенкеллĕх пулнăђĕ. Кăçал сахалрах пулмалла, мĕншĕн тесен Çĕпĕрти Çĕнĕ-Уçпеневи йалĕнђи комсомол йађейкки акса тунă сĕлле пĕр урапине выђăхсем ватса кайнă, икĕ урапи халĕ те хирте сапаланса çумăрсем айĕнђе пăрахăса тухса лараççĕ.

Тырри пăрахăса тухаĭ, комсомол йађейккин çекреттарĕ Петр Слатков пăрахăса тухасси паллă мар.

## Саңатти çук, писсăрĕсем пур.

„Ахах-йун" тесе ал пуснă корезпотент Мăнсĕнтĕрте Тутаркас районĕçтăвкомĕ таттисĕр ĕç ерҫине мĕнле куçни çинђен ак çапла çырса пĕлтерет:

„Тунтикун Мăнсĕнтĕр тăрăх уткалатăп... Районĕçтăвком çуртĕ патне çитетĕп хуллен уткаласа. Мана хирĕç крыђсаран икĕ ĕне хăрăс тухаççĕ, иккĕшĕ те хĕрлĕ ĕнесем. Кăна курсан ĕнтĕ: ой-ой-ой, пайан РЁК-ре ĕнесем ĕçлеççĕ пулас, терĕм. —А-а, апла мар—таттисĕр ĕç ерҫине куçнă пулас, слушăтђисем канаççĕ пайан, ĕнисем ĕçлеççĕ. Ĕнесем тухсан, пӳрт умне еп кĕрсе те куртăм. Пӳрт алăкĕ те уçах, никам та çук. Мур! мур! Ĕнесем РЁК-ре ĕçлеççĕ те алăкне те хупмаççĕ, те опет тума карĕç, ăна пĕлмерĕм, ыйтмарăм та, ни сторовă тумарăм. Ӳлĕм курсан ыйтса пĕлĕп, „Капкăн" туса кайса калăп.
.,Капкăнран". Приђаĭ к çветĕнийу (асра тытас).

Асран тухса кайсан та, хуђĕ тухса ан кайтăр тесе, „дело" çумне („Капкăн" „дели" çумне) çĕлесе (кукарса) лартас.

## 80 штук çапнă пĕлтерӳ.

Ăслă етемсем — копператтăрсем. Кĕнђелерти ĕç пултаруллăхне ӳстермелли майсем тупма пултараççĕ. Халĕ, кĕркунне пулнăранпа, ђăхсен çăмарта тăвас пултаруллăхĕ пĕтсе ларнине асa илсе, Ђăваш Птитсевотсойус, машшинисткăсен пултаруллăхне çак хута 80 штук çаптарса ӳстерме тытăннă:

**Всем учреждениям гор. Чебоксары и яично-птичным комбинатам.**

Сообщается для сведения, что Чувашптицеводсоюз перешел в здание Наркомзема —низ, левая сторона от входа.

Член правления АЛЕКСЕЕВА.
За секретаря ЩЕЛЫВАНОВА.

Ку хута 1—2 тенкĕ укça шеллемесĕрех „Канашра" çапса кăларттарнă пулсан, Птитсевотсойус хăш çурта куçнине 80 „уђрешгеви" пуçлăхĕсем анђах мар, пĕтĕм халăх пĕлетђĕ, тейĕç пуçсене сулласа хăш-пĕрисем. Пуçсене сулмаллийех çук ун пирки. Птитсевотсойусра ĕçлекенсем ăслă: Ђăваш республĕкĕнђе пурнакан 833 пин çыншăн 833000 шт. пĕлтерӳ машшинккăпа çаптарса 1666 рассыђнăйа Ђăваш респуплĕкĕ тăрăх кăларса йама та хатĕр пулмалла вĕсем. Хатĕрри 80 çапнă хутран та курăнаĭ.

## Сăнавлă пушар.

Амерĕкри Вашинктон хулиђе Стантартсен Пуровĕ икĕ хутђен сăнавлă пушар туса пăхнă. Кашнине ратна майлă тунă 35 вутра çунман шкапсенђен хăшĕ пушара парăнманнине сăнаса пăхасшăн çавна тунă.

Те Амерĕкре туса пăхнине илтсе, Çирĕклĕ-Шăхаљ (Кĕçĕнйелђĕк р.) й.-совет çыруçи Краснов пĕр ӳсĕрпе сăнавлă тревокă туса пăхнă. Пушар „сӳатерме" пухăнсан, йал халăхĕ çекреттарне палламасăр пушар сарайĕ çинђен пакурсемпе сĕтĕрсе антарнă та, лађакана ђиксе пăхнă, кăларса та пăхнă. Кайран, пылђăкне хырса й а р с а н, çекретгарне палланă. Краснов хушаматне улăштарттарса Ђернов хушаматлă тăвас пулаĭ ăна. Милитсе, улăштарса парсам ĕнтĕ çав çекреттар хушаматне!

## Лавпа автомопил.

К. Ç. Ç. çыраĭ:

Тулик-касси çынни, Сахар Йăванĕ, 2-мĕш уђастккăри Халăх суђĕн çекртттарĕнђе ĕçлекенскер, октăпĕрĕн 12-мĕшĕнђе ӳсĕрпе Самук-кассине пырса кĕрсе хуликанла ĕçсем тунă хыççăн, йалтан лав туптарсе, хăйне килне (5 çухрăма) леçтернĕ, тет.

Хуликанла ĕçсем тума пырсассăн, 5 çухрăмшăнах лав туптармалла пулнă, мĕншĕн тесен Сахар Иванĕ, кăштах вĕреннĕ çын пулин те, Амерĕке пурăнма куçайман. Пуринђен ытла Амерĕкри Пĕрлешӳллĕ Штата пурăнма куçнă пулсассăн унăн хăйĕн те... лаша мар... автомопил пулађђи тен. Ара унта кашни 5 çынна 1 автомопил тивет те... 4-шне сирсе йарсах хăйне ваљђи автомопил илеђђех вăл. Ыйтма пултараĭ çынни!

## Сăнавлă пахђан сăнавлă ĕçĕсем.

Ултă пусăллă уйри çур теçеттин çĕр çинђе 700 пăт паранкă пухăнаĭ. Анђах кашни çул пĕр пек пулмасĭ—хăш ђухне нумайтарах та пулаĭ, сахалтарах та пулаĭ. Ахаљ уйра та çавах. Ав, Мăнпӳкасси (Шуп. р.) комсомол йађейкки пĕлтĕр 4 пăт лартса 35 пăт паранкă тунă, кăçал çаввырăнтах 4 пăт лартса 2 пăт тухнă.

Паранкă пулманшăн йађейккă çекреттарĕ сыснасене айăплаĭ. Тĕрĕс. Айăпламалла çав, мĕншĕн тесен сыснасем ухмах—нойапĕрĕн 6 мĕш ђислиђђен уйра выртакан паранкăх çисе йама пĕлеймен.

## Арифметтĕк урокĕнђе.

Уђитлĕ (сатађ вулаĭ). Кăçал Иванов усламçă çине 520 тенкĕ налок хунă. Ивановĕ сайавлени панă та, налок комиççи 200 тенкине ђакарнă. Пĕлес пулаĭ: миçе тенкĕ Ивановăн налок тӳлемелле пулнă? Петров, есĕ çыварса ларатăн тем! Ну-кă, калаха—мĕн çинђен каланăха сатађăра?

**Вĕренекен.** Сылтăм сулăнђăк çинђен, Васили Петровђă.

# ТӖРЛӖНӖ КУЛӐШ

## Сарӑмсӗр инкексенђен васкавлӑ пулӑшу.

**Шыва путса пӳлӗнӗ** ҫынна ђӗртес тесессӗн малтан путнӑ ҫынни камне пӗлмелле. Уђрештенире ӗҫлекенскер пулсассӑн хӑлхине кӗрсе кайнӑ пылђӑкне тасатса кӑлармалла та, унтан пӗр хӑлхинђен шӑппӑн: шалу параҫҫӗ, темелле анђах,—ҫийӗнђех ура ҫине сиксе тӑрӗ. Пӳлӗннӗ ҫынни кулак пулсассӑн: сана колхоса илтӗмӗр, темелле, вӑрман уполномођӑнне—тутине ҫпиртпа сӗрсе йӗпетмелле, хресђене—копператива тапак килђӗ, темелле. Капла туни те пулӑшмасан — сӑмсипе карланкине ђӑх тӗкӗпе кӑтӑкламалла. Ђӑх тӗкӗ ал айӗнђех пулмасассӑн, «Капкӑн» вуласа пама та йурать.

**Сӗрӗм тивсен** Ђиркӳ йенелле пӑхтармалла мар. Хӗресне хывтармалла. Мускаврва тухнӑ «Тӗне хирӗҫ вӗренекен крушоксен кӗнеки»не вуласа памалла. Кӗнеки хаклӑ мар (245 страниҫӑллӑскерне 1 тенкех параҫҫӗ).

**Ыйхӑ ђирӗпе** ђирленӗ ҫынна хӑвӑртрах халӑх пухса претҫетаттӗлтен йе ҫекреттартен кӑларса пӑрахмалла.

**Вар ыратнипе** слушӑшђи ђирлесен, хӑвӑртрах отпӑск памалла, вара пулђнитса алӑкӗнђен тухсассӑнах вар ыратни пӗтсе ларӗ.

**Пӗҫертсе йарсан** (РКИ-рен) лайӑхрах ӗҫлеме тытӑнас пулать.

**Аҫа ҫапсан** пуҫлӑх пушмакне (хӑвӑнне мар, конешнӑ) 5 йе 6 хутђуп туса илни пулӑшать. Унпата пулӑшмасан арӑму кайса калаҫни пулӑшать (арӑму хитре пулсан).

**Тӑнсӑр пулсан**—хут вӗренме каймалла. Хаҫат - шурнал ҫырӑнса илмелле.

**Ерех ӗҫсе кӳпсе вилсен**—йӗплӗ ҫӑмах ҫитӑрмелле.

## Сатађсем.

1. Хӗлӗп Ваҫли пӗр кун хушшинђе 3 мӑшӑр ҫӑпата тунӑ. Миҫе мӑшӑр тунӑ вӑл 3 кунта?

ОТВЕТ. 2 кунта та 2 мӑшӑр. Мӗншӗн тесен 1 кунӗнђе вӑл ӗҫкӗре пулнӑ.

2. 1028-мӗш ҫулта Ђӑваш респуплӗкӗнђи пулђнитсасене 1.359.215 ҫын пынӑ шутланать. Мӗншӗн мӗлйун ҫура ҫитеймен.

ОТВЕТ. Мӗншӗн тесен пулђнитсасене ҫу илсе пыракансем вӑл хисепе кӗреймен.

3. Куславкка саватне тунӑ ҫӗрте ђӑваш 16 прођђӑн ӗҫлет, Ҫӗмӗрле компинатне тунӑ ҫӗрте 25 прођђӑн. Ик савӑтра миҫе прођђӑн ӗҫлет ђӑваш, тата хӑҫан строиттӗлствӑра ӗҫлекен ђӑвашсен прођђӑнӗ хушӑнӗ.

ОТВЕТ. 20 прођђӑн. Ђӑвашсен прођђӑнӗ, савӑт тунине курма пыракан екскурсантсене хисепе илсе строиттӗлсен шутне кӗртсен, пысӑккӑнах хушӑнма пултарать.

## Етемӗн 5 сисӗмӗ.

**Хӑлха илтмест** — сиес хушса хӑварнӑ сӑмахсене.

**Куҫ курмасть** — пуҫлӑх тунӑ йӗркесӗрлӗхсене.

**Сӑмса шӑтӑкӗсем шӑршӑ пӗлмеҫҫӗ**—йӳнӗ пулла илнӗ ђухне.

**Ҫӑвар ҫути пӗтереҫҫӗ** — ҫупа сӗт хакӗсем.

**Хыпалама пӗлмеҫҫӗ**—кулаксене.

## Хронӗккӑ.

**Шупашкарти пуштӑ кантурӗнђе** ђисткӑ вӑхӑтӗнђе калама ҫук йурӑхсӑр ӗҫсем тухса тӑраҫҫӗ, мӗншӗн тесен йурӑхлисем гакҫанах пуштӑпа кайса пӗтнӗ пулнӑ.

**„Капкӑн“** пайантан пуҫласа хӑйӗн лаҫҫинђе пӗҫернӗ йӗплӗ ҫӑмахсемпе кирлӗ таран сашђитнӗксене тӑрантарма шухӑшлать. Мӗншӗн тесен кунти сашђитнӗксем ҫапла калаҫҫӗ: пире кам тӑрантарать, епӗр ҫавсен май анђах пулма пултаратпӑр, теҫҫӗ. Йӗплӗ ҫӑмахпа тӑрантарсан, „Капкӑн“ кореспотенђӗсем майлӑ пуласса шанма пулать.

**Ҫутӗҫ комиссариађӗ пухалтерийӗ** пит йапӑх ӗҫлесе пынӑ. Мӗншӗн? Ӗҫленӗ ђухне пухалтӗрсем лармалли пукансем йапӑххисем пулнӑран. Пухалттӗрсене ун пек йапӑх пукансем ҫинђен куҫарса лайӑхрах скамейккӑсем ҫине лартмалла. Лайӑх скамейккӑсем Аслӑ сутӑн сут тӑвакан пӳлӗмӗнђе нумай.

**Ђӑваш театтӑрӗнђе** икӗ труппӑ, тата кино ӗҫленӗ пирки, ђӑваш артисӗсем валђи реппетитсисем тума вырӑн та ҫук... тула тухма вырӑн пур.

**Електритсӑ стантсинђен** пыракан ҫутӑпала хваттерсене ҫутатакан електритсӑ ламппӑђкисем йулашки вӑхӑтра куҫӗсене мӑђ-мӑђ хупма пуҫларӗҫ. Пӗлекенсем каланӑ тӑрӑх, ламппӑђкӑсем мӑђ-мӑђ хупса — стантсӑра ӗҫлекенсем ҫинђен ђисткӑра нимӗн те калама кирлӗ марри ҫинђен систереҫҫӗ.

**Аптекоуправлени** Шупашкарта ђирлекенсем нумайланассипе кӗрешмелли ҫӗнӗ май тупнӑ. Вӑл май тӑрӑх, кирлӗ емелсенех Шупашкара кӳрсе памалла мар; кӳрсе парсан ђирлес текенсем нумайланасран хӑрамалла, тет.

**Коркопӑн** ӗнисем пусас умӗн самӑрланас вырӑнне, ырханланса кайаҫҫӗ. Самӑрӑлма хушмалла (ӗне пӑхаканӗсене мар, ӗнисене).

### Тапакан лаша.

— Ваҫли Хветӗрӗн лаши тапма вӗреннӗ.

— Кӑҫал ара Хветӗрӗ лашана парас сӗллине пӗтӗмпех сутса ӗҫсе йанӑ та... ҫавӑнпа тапать ӗнтӗ лаши.

Çăмарта лайăх пухнăшăн виçĕ ђаçтнĕкле акĕнт Ђăвашсойусран преми илнĕ.



## ЂĂВАШСОЙУС

**çăмарта лайăх пухнăшăн премисене пăхмасăрах валеçни.**

# Кăштах тăхтасан.

— Епĕ, тăвансем, каллех çав пушар хатĕрĕсем çинђен. Ĕçсене пуçтартăмăр ĕнтĕ, йусасђĕ вĕсене.

— Йусăпăр-ха, Çемен Хролђђă, йусăпăр!

— Хăçан? Çăвĕпех ђĕлхесене хыçрăмăр та, пĕр машшинĕ те тăрлавлă мар. Йал пĕви те... ех, тур çырлах! Тем пулсан ак...

— Ес, Çемен Хролђђă, питех ан харкаш-ха. Кăштах тăхта ĕнтĕ, йусăпăр...

— Ак, пушăрах вăхăт пулсан—йусатпăр. Мĕн ытла пырна хĕрхенмесĕр çухăран?

— Есĕр мĕн тата, шуйттан çăварĕсем?.. Пĕртепĕр пушар пулсан?!

— Е-ей, ес калăн! Тур çырлахĕ-ха.

— Йавăл çитĕр сире! Астăвăр, кайран ўпкелешмелле ан пултăр...

— Йусăпăр-ха... Нумай вăхăг кирлĕ-и ăна? Çемен Хролђђă. Ђалăш йалĕнђи совет претçетаттĕлĕ, тарăхнипе пĕр курка пек сурђĕ те, пухуран тухса утрĕ. Халăх та, пушар хатĕрĕсене „кăштах тăхтасан“ йусама пулса, пухуран саланђĕ.

* * *

Кунсем... кунсем хыçалтан корђитсăпа сĕрсе йанă кушак аçи пекех хытă ђупаççĕ. Мушиксем иртнĕ пухура претçетаттĕл пушар опосĕ çинђен тăп-тăр шыв пулиђђенех кăшкăрнине ним пăшăрханмасăрах манђĕç. Хушăран, леш сăмах каллех тапратсан, ăна тўрех çапла лаплаттарса хунă:

— Е-е, уксак шуйттан... М ă н т ă р хĕр çумне çыпăçнă пек çыпăçат, сволăђ. Йерçменнине курмасТ штолĕ?!

... Анђах хуйхă куçа курăнса килмест... Пĕр каçхине йал варĕнђен трук вут сиксе тухрĕ те, пĕр трук темиçе пўрт хыпма пуçларĕ...

Пушар сарайĕ унталла-кунталла, ухмаха йернĕ пек ђупакан халăх çине мĕскĕнĕн пăхса лараТ. Машшина туртса тухрĕç—вăл пырсăр пулнă сурăх пек темиçе хутђен ăхăк, ăхăк, терĕ те, салакайăк сурђăкĕ ђухлĕ те шыв сапаймарĕ. Пиђкисем тĕкĕнсенех арканса карĕç.

— Ех, йолкки-палкки кантăр вăрри... терĕç мушиксем.—Тăхтамалла мар мĕн те...

**П. Пойаркин.**

# САВӐННИПЕ.

Ахаҭ ҭух Иакур Микулайӗ сахал ӗҫет. Теплее мӑн ӗҫсем пулсан, хай шалу хушнӑ ҭух, арӗмӗ халсӑр ҭух, йе тата токлат мӗн тусан хӗпӗртевипе ниҫта кайса кӗреймесӗр ӗҫет. Ахаҭ ҭух пустуй мӗн ӗҫев! Пайан та вӑл ӗҫместҭӗ пулӗ, — пайан тунтикун, вӑл тунтикува хӑрӑк кун тесе ун ҭух ӗҫме мар, кӗленҭе пролкине те шӑршласа пӑхмасӑ, арӑмӗ ҭей лартсан та, кӗленҭе майлӑ тесе, ҫут стаккавтан ӗҫмест, анҭах... пайан ун ӗҫмеллех. Пайан унӑн ҭӑтма ҫук савӑнӑҫ! Ҫур ҫул майлӑ пуҫа ҫӗмӗрсе, ӗнсе хыҫӗнҭен кайалла туртса тӑракан пӑйав таталнӑ. Паҫӑр анҭах тӑлланӑ пек утакан ури хаҭ йар вӑрӑмӑн утма пуҫларӗ. Мӗншӗн-ши ку? Пайан ахаҭ те кунӗ ҫутӑ пек,—те куҫ вӑйланнӑ, пӗлме хӗн.

— Ну, савӑнӑҫ! Ӗҫмесӗр ҭӑтма пулас ҫуках! Арӑм ес те савӑв! Иккӗн вӗг... еп... ҭисти... ах туртурах! Пилӗкӗнҭен ҫулса тытса пӑркӑҭланӑ пек пӑҭӑркарӗ тӗкӗр витӗр пӑхса тӑракан арӑмне пӳрте кӗрсенех.

— Ай-уй, Микул, уртӑни мӗн?

— Арӑм, Плаки! Луҭҭӑ ан калаҫ! Ах, туҭккӑ.. тем тӑвӑттӑмҭӗ! Савӑнӑҫ вӗт! Пайан ҭистка иртертӗм!..

— Еп савӑнатӑп, а неушлӗ еи савӑннӑ ҭух, ман лешин савӑнмалла мар. Еп савӑннӑ ҭух хырӑм та савӑнтӑр! Ҫук, кайас. Ӗҫес савӑннипе, тесе тухса утрӗ Микула.

—

Ҭӳреҭесене утийалпа, сӑхмансемпе картланӑ пӳртре сӗтел ҫинҭе пӗр ҭетвӗрт хӗрӗх кратӑсли, пӗр ҭашкӑ йӳҫӗтнӗ хӑйар, виҫ теҫеткӗ ҭӑмӑрлӑ ҫӑмарта, пӗр ҫатма ӑшалани, тепӗр ҫатма ӑшаланӑ ҭӑхӑт т. ыт. тӑнӑ. Сӗтел хушшинҭе икӗ ҭун М-па М. пӗҫисене пӗр пӗринни ҫине хурса кӑшӑлланӑ виҭке майлӑ пилӗкрен тытса ларнӑ. Куҫӗсем иккӗшӗн те хыпса тухан пушар пек ҫуннӑ.

— Ек, Марӳк, еп вӗт ҫаплипех! А што мана ҭисткӑ! Услам ҫу пек йака тухрӑм. Савӑнӑр! Купӑсҫӑ Сентек! Тайош ҫута Сентеке! Ил ҭервонтсӑ! Мана мӗ укҫа, на вол!—кӑларса ҫапрӗ укҫа карманне, унпа пӗрлех ниҫта кайса кӗрейменнипе икӗ стаккан шӑлса утрӗ,—ҭасрах ҭӗнсе кил Сентеке!

— Купӑс ҭӗнтерес тесен, лешсене те ҭӗнес. Иккӗн ташламалла мар вӗт!

— Ҭӗнес! Ҭӗнес! Вӗсене алҭак мар, Верӑла Туҭӑна та ҭӗнес! Вӗсем те ӗлӗк сан пекех ман савнисем пулнӑ. На ҭервонтсӑ, ҭӗн вӗсене те.

—

Ҫур сехетрен ҭӳреҭесене карнӑ пӳрт туйири пек кисренсе ларҭӗ.

Сӗтел ҫине татах хутшӑннӑ «туссем» савӑннипе вӗттӗн кисренсе, пӑркаланса тӑҭӑҫ. Купӑсҫӑ Сентек те купӑса пуҫ тӑрӗнҭе тытса савӑнӑҫ кӗввисем выҭҭатрӗ.

— Савӑнтӑр тӗнҭе!

—

Виҫ кунтан Микулана хуйхӑпа ӳссӗррине куртӑм. Вӑл 417 тенкӗ укҫа салатнӑ, паллаймасӑр, хамӑн тесе...

Сут 5 ҫуллӑх хупмалла тесен: — Ой-ой мана пӗр каҫшӑн пилӗк ҫуллӑха-и? Уҭрештенирен кӑларнипе ҫитмести? Ну, сыв пул!—кӑшкӑрҭӗ. Хӑй, ҫарамас пӑр айӗнҭе пӗр ерне выртнӑ пек ҭӗтрет. Н. Ҭурпай.

# ПУП ҪАННИ.

(Телекаткӑ).

Урампала пырать пӗр пуп,
Паттӳшки!
Кӗлетки ун шӑпах пӗр куп,
Маттушки!
Тумтир ҫанни аслӑ-анлӑ,
Паттӳшки!
Пӗр манашкӑ вырӑнаҫмалла,
Маттушки!
Тумтирӗ те ҫутӑ—кӗрен
Паттӳшки!
Сӑмакункӑ шӑрши перет,
Маттушки!
Кӗлеткивҭен ҫу шӑранать,
Паттӳшки!
Сухаҭ тӑрӑх хӑсӑк йухать,
Маттушки!
Варук инке патне кайнӑ,
Паттӳшки!
Унга ӑна кӗлеме ҫапнӑ,
Маттушки!
Варук инке ывӑл тунӑ тет,
Паттӳшки!
Ашшӗ унӑн ӗссӗр пуп тет,
Маттушки!
Пупне сута панӑ теҫҫӗ,
Паттӳшки!
Алиментпа тир сӗвеҫҫӗ,
Маттушки!

Ҫ. Шӑпҭӑк

*) Ку сӑвва иккӗн тухса вуламалла. Малтанхи хӗр, ... мӗш арҫын.

# ПАРОМЕТР ЙӖППИ

**Шупашкарти сашҭитнӗксем сут ӗҫӗ ... клас куҫӗпе пӑхман, кам нумайрах па... ҫавӑн хутне кӗрсе пынӑ.**



**САШҬИТНӖК:**

**Ик айкки те тӑвайкки—**
**Ӑҫта пысӑкрах укҫа кушелкки,**
**Ҫавӑнталла сӗвекки.**

# Куç хыçне ларнă йăпăлти.

Пыратпăр. Калаçмасăр пыма аван мар тесе, сă-
ќ шыратăп.

— Ђăвашла çпектаккăли пайан, йе вырăсли?
се хутăм мĕн пуçа килнине. Матка ђăвашла çпек-
кăле кайманнине пĕлетĕпех ĕнтĕ, ыйтрăм çапах та.

— Ђăвашли пулсан, çӳрессĕмех çук.

— Ђăваш вĕт есĕ? Ма йуратмастăн?

— Хм! Вăн йепле. Ђим-ха, калуш хывăнђĕ—тесе
ікĕнетĕп çĕрелле. Каланђа çинђе 8 çапрĕ. Çитрĕмĕр
ттăра. Касса умĕнђе кĕçеленнĕ çӳçлĕ ађа тăрат̆.

— Икĕ свонок пулђĕ, хаљ çеç ĕлкĕретĕр-ха,—
лат туса пађĕ вăл пире ыйтмасăрах.

Малта лармалли вырăнсем йулман, ђи хыçала,
на çумне лармаллисенђен, тепле майпа, виçĕ пилет
нă.

— Калла кайатпăр пулĕ, лайăх мар унта, тĕттĕм
есре—систеретĕп маткана. Каккуй унта! Васкат̆
а!

— Ил ђасрах, кайа йулатпăр, калла каймастăп—
вăрат̆ хăлха айĕнђе.

Икĕ пилетне илтĕмĕр те, ђупса хăпартăмăр çӳле.
љ пулсан темпе те лартаймăн вăл вырăна, кирлĕ
ђухне вырăнне те тиркемест.

Ђаршав уçрĕç пулмалла (пире ђистийех курăн-
т̆)—çутă сӳнђĕ. Ну йурĕ, ларатпăр пуçа тăратса.
ı согрутнĕксем, ăнсăртран ан курђăр тесе, кĕтес-
кĕрсе лартăм. Май килсен, çывăрса илме те йурат̆.

Пиртен маларах икĕ çамрăк пăшăлтатса калаçса
аççĕ. Малтан епĕ внимани опратит̆ тумарăм. Анђах
сасă, темле, паллакан сасă пек туйăнса кайрĕ.
нах илтетĕп, хутран ситрен ман йата асăнат̆.

Тилмерсе пăхрăм (хыçалтан малтисене пăхма пит
н, йаснă курăнат̆), капташка! Ман умри сакă пек-
çинђе пирĕн рекистраттăр ман çинђен калаçса ла-

— Ну-ккă, шелмă, нуккă, мĕн сулĕлтетен есĕ!..

Ман уђрештенире вăл иккĕмĕш çул ĕçлет, епĕ
ĕретлĕ калаçнине илтмен, пĕр сăмах калат̆, иккĕ
ат̆, ăна та пуçне çĕклесе мар, куçĕсĕне йăмăхтар-
ıса, çĕрелле пăхса. Куçĕ унăн мĕнле тĕслине кур-
пĕлместĕп, кукта та курăнмаст̆ те, сасси илтĕнет.
ін сасси.

— Есĕ мана Мирун Макçимђăран хăрат̆, те-
тĕн-?—сарлака ĕнселлĕ пуçне çавăркалат̆ вăл, — хăра-
масăр вара! Хăрас пулĕ! Маткине те хăратаймаст̆ вăл.
Пуçĕ çине хăпарнă матки. Çын пулати вăл,—кĕрет
ман хăлхана.

Çпектаккĕле килсе тепĕр çпектаккăљ куратăп.
Ыттисем пурте хура куракcем пек çăварĕсене карса
сгсенă çине куçĕсене илмесĕр пăхаççĕ. Ман матка та
хăш-пĕр ђухне ури вĕçне тăрса пăхат̆.

— Кăшкăрашма тытăнат̆ вара уђрештенийе пыр-
сан,—ђарăнаймаст̆ ман рекистраттăр. — Конешнă вăл
калаçнине итлен пек тăватăн, кайраљ, вăл кайсан, хă-
вăннех, ху шухăшланă пекех ĕçлетĕн.

— Пăх халĕ есĕ ăна, мĕнле анархис ларат̆, ах,
шăрђăк! Е?

Айалта, парттĕрте алă çупма пуçласа йађĕç. Те-
аттăр кĕрлет.

— Писс! Браво-о! Писс!

Шавланă вăхăтра матка хăлхине çăвар тĕлне
турăм та, ăна антраксенђе нимĕн те ан калаç тесе
хытă шаккарăм.

— Çынсем курсан намăс кунта ларма. Укçине
хĕрхенĕ, тейĕç. Илтетни? Сассăна парас ан пул!—йу-
ватăп пурнепе, матка та тĕлĕнсе кайрĕ.

— Мĕн пулнă сана?

— Кайран калăп. Шăп лар килнĕ тĕк!

Антракт вăхăтĕнђе сасăпах калаçма тытăнђĕ ман
рекистраттăр. Итлесе кăна лар. Итлетĕп, мĕн тăвăн.

Темĕн те пĕр калаçат̆, айне-çине хăвармарĕ. Çем-
йене те слушпăна та. Çын вырăнне те хумаст̆. Курă-
сăрђĕ, есĕр ăна, вулакансем, уђрештенире, анкăл те-
йĕр, пĕр усал сăмах калаçмаст̆, мĕн хушнине итлет,
Мирун Макçимђă çеç унăн çăварĕнђе. Куçран пăхма
та вăтанат̆. Вăт шан вăтанакан çынна! Куçран пăхса
тӳрĕрен калаçакан çын пуринђен те аван вăл.

Çпектаккăљ хыççăн киле таврăнсан нумайђен
шухăшласа лартăм. (Айхă пуснине те пăхмастăп).

— Рекистраттăр, примерлă йăваш ађа, ман çине ник-
çан сивĕ куçпа пăхманскер, ман çинђен мĕн калаçат̆!
Мĕн пулнă ăна? Уђрештенире сопранисенђе ма нимĕн
те ђĕнмест вăл? „Аха“ ăнласа илтĕм епĕ тин, уђреш-
тенире ђĕнменнине тавăрат̆ вăл ман куç хыçĕнђе. Вăт
шав! Пыр та шан ђĕнмен çынна? С—н.

# Вилет пуљ ĕнтĕ.

Шупашкарта темĕнскер тулнă пек, пĕр ђарăнма-
çăмăр çурĕ. Ниçта пусма çук шыв. Шăпăргатат̆
е, каç та. Ђылайĕшĕ тарăхрĕç вăл вăхăтра. Ка-
:ăр урама тухма çук. Турра ĕненекенсем ăна ӳпке-
іе, хăйулăраххисем вăрçма тытăнђĕç.

— Ват супнă, çăмăра ђараймаст̆—йунаççĕ çӳлел-
ăхса.

Çӳлтен, хура пĕлĕтсем çинђен вĕçĕмрен шăпăр-
ı çăмăр анат̆, урама тухсанах ура йĕпенет, нас-
(сунас, апђх-и-и!) сивĕ тытма пуçлат̆, пуç ыратат̆.

Суйас мар, пытарас мар, Шупашкар хулин коп-
ктивне те вирлĕн вăрçакансем пулђĕç. Ђăвашпай-
іне те май килнĕ ђух, ђĕрене витмелле сăмахсем
рĕç. Тивĕçлĕхпе вăрçнă-и тен? Пĕлместĕп.

— Иаланах çапла вара вĕсен—терĕ урине силле-
:е (поттинкки ăшне шыв тулнă) Ваççили Çеменђ-
-йалавах çапла, çуркуннепе кĕркуннесем калуш
хĕлле çăматăпа ăшă паљтто тупаймăн пирĕн коппе-
івсенђе.

Ернерен илтрĕм йулташ инфљуент сипе ђирленĕ,
маљари те çакланнă, кăвар пек пĕçерсе выртат̆—39
кратăс ытла.

— Вилеп пулĕ ахăр, терĕ вăл мана курсан,—
Шупашкар копператтивĕсемех пĕтерђĕç мана.—Ваççи-
ли Çеменђђă куçĕсене йăвалат̆, (те йĕме тытăнђĕ).—Еп
вилсен,—сассине ђĕтретсе аларĕ вăл,—еп вилсен, çыр
есĕ тархасшĕн шурнал çине йе хаçат çине, хам çырма
пĕлместĕп. Çыр, хула копператтивех пĕтерђĕ мана.
Хĕлле хĕлĕпе ăшă тумтир килет тесе улталарĕ. Астă-
ватни, мĕнле сивĕсем пулђĕç пĕлтĕр? Вăт. Вĕсене кĕт-
се, çаплах илеймерĕм, шăнса пăсăлтăм. Апрел уйăхĕн-
ђе çеç кӳртерђĕç, анђах хĕвел вăл вăхăтра вĕсен кĕ-
рĕкĕнђен те авантарах ăшăтма пуçларĕ. Хаљ вăн çу-
мăр хускалђĕ. Калуш пурђĕ те, анђах пĕрне такам
шуйттанĕ вăрларĕ, калушсăр тăрса йултăм.

Шел ађине,—нимĕн те тума çук, йепле пулăшас
тетĕн? Ху калушна хывса парсан, есĕ те хурçă çын
мар. Шел, анђах нимпе пулăшма çук. Вилет пуљ ĕнтĕ
çав Корпо пиркийех. Вилсен тăпри çăмăл пултăр.

И—н.

# Йупасемпе тункатасем.

Шупашкарти пуштăга телекраф пуçлăхĕ Сыҫҫов, мĕн ҫухлĕ кирпике шутан месĕрех, телефон йупис(м тума саккас панă.. Çыхăну аппратĕнҫе пурте пекех й пăх ĕçлени палăрат.




**Йупасем кӳрсе килнĕ хресҫен** Хăвăр тума хушнă йупасене турттарса килтĕм.
**Пуштă çынни.** Турттарса килтĕн пуҫ те... анҫах пире кирлĕ мар пулҫĕ.
**Хресҫен** Кирлĕ мар пулҫĕ еппин. Нта!.. Хам та кирлĕ мар пуҫ тетĕп çав, мĕншĕн тесен йу сем хăвăрăн та (уҫрештенире) нумай. Ав пуçĕсене каçăртса ларaççĕ.

# СУТ ÇЫРУÇИ.

Çу уйăхĕ. Шăрăх.

Пĕр ирхине Халăх сутне çамрăк, ӳссе çитнĕ, илемлĕ аҫа пырса кĕрет. Круçтйĕв йатлă пулнă вăл.

Халăх Иуçтитсин Кăмиссариатĕнҫен Тугаркас райобĕнҫи Халăх сутне çыруçă пулма килнĕскер.

Ййулĕн 27-мĕшĕ—сут кунĕ. Илйиккăри кооператтив укçине салатнă прикашҫĕк А. Ҫернов ĕçне пăхмалла. Пӳртре çынсем туллийех.

Сут пуçлавҫĕ. Çыруçи Крустйĕв.

— Ĕçе пăхма сута шанатра?—тесе ыйтаť сутйе сутлашаканнисенҫен.

— Шанатпăр, шанатпăр, ара..

Крустйĕв протоккол çине... Просмотреть дело уверяем нарсуда, тесе çыраť. (Об'явлено состав суда, отводов не последовало, тийесси выраннe).

— Хăвна-ху ку ĕçпе айăплă шутлатни, Ҫернов, тесе ыйтаççĕ.

— Çук, пĕртте айăплă мар епĕ. Мĕншĕн тесен...

Крустйĕв çыраť:

Обв. Чернов. говорит: что я себя ечитаю совершенно не виновным. После ревизи меня почему оставили меня, знаю что растрачено мною кооп тивные деньги. Обвиняю правлению кооп-ва...

Обвиняю я правлению кооп-ва так как, ни в правельные записи Но очень хорошо что я с класть в свой карман деньги в сумме 405 ру вы пусть и другие сумеете ли? зделать такую р рату,

тесе Ҫернов калавине çырса пĕтерет.

Суг маллла куракаинисенҫен ыйтаť. Ма Варвара Пакрова ыйтаççĕ, кайран ыттисене. Сут на хыççăн çыруçи çыраť:

Багрова В. свиден-ца говорит: Я Багрова В его рас 3 раз 348-38 пог. № 184-485-16-52, 69 3 31—235 р весы 20 р. остается 93-23 к. по теле звонили и узнали что ограбли лавки и устано растрату после ревизи 279 руб.

За ним чис. 339-77 к из-него выч-44-27‘‘; ытти те.

Протоккол çакăн пек ăнланмалла мар тем в мĕшех çырса кайнă. Совешҫанине кĕрсен кăна с кураť те тĕлĕнсех кайаť.

Ҫикаркк

# Литтераттурӑ вӑррисен ЛАХХАНӖ

## Ҫамӑнне кам вӑрланине вулакансем хӑйсемех пӗлме кирлӗ.

* * *

На заре ты ее не буди
На заре она сладко так спит!
Утро дышит у ней на груди,
Ярко пышет на ямках ланит.

И подушка ее горяча,
И горяч утомительный сон,
И, чернеясь, бегут на плеча
Косы лентой с обеих сторон.

А вчера у окна ввечеру
Долго, долго сидела она
И следила по тучам игру
Что, скользя, затевала луна,—

И, чем ярче играла луна,
И чем громче свистал соловей,
Все бледней становилась она,
Серце билось больней и больней.

Оттого то на юной груди,
На ланитах так утро горит.
Не буди-ж ты ее, не буди:
На заре она сладко так спит.

Вырӑссен XIX-мӗш ӗмӗрти поеҫӗ **А. А. Фет.**
Ку—1892-мӗш ҫулта, нойапӗрӗн 21-мӗшӗнҫе вилнӗ.
(Сӑввине „Полное ссбр. сочинений А. А. Фета" йат-кӗнекерен, 306 стр. илнӗ.
Кӗнеки Петерпуркра, 1912 мӗш ҫулта, Тукташ, 5 лхискер, катӑк йӗмпе ҫупса ҫӳренӗ ҫух тухнӑ).

* * *

Ан вӑрат ес ӑна ирсерен,
Ун ыйхи ирхине питӗ лӑпкӑ.
Шурӑмпуҫ ҫатӑрӗ айӗнҫен
Аҫаш пиҫӗ ҫине хӗвел пӑхтӑр.

Пиҫӗсем ун хӗрелнӗ улма,
Куҫӗсем аслӑ тинӗс пек таран.
Ах, йепле ҫавӑн йевӗр пулма
Ӗмӗтри пурнӑҫра ес пулгарӑв?

Ҫӳҫӗсем укаланӑ хӑйу,
Ҫӗлен пек йавӑнса саркалачнӑ.
Лӑпкӑ пултӑрҫӑ канӑҫлӑ ыйху,
Хӗвелпе хӗрсе ҫитнӗ паланӑм!

Каҫхине ҫӳреҫе умӗнҫе
Саввине кӗтсе вӑл ыйхӑларӗ...
Тӳпере ҫӑлтӑрсем темиҫен,
Тӳпере лӑпкӑ каҫӑн хунарӗ.

... Ан вӑрат ес ӑна ыйхӑран,
Авӑ пӑх, ун ыйхи питӗ лӑпкӑ.
Ах, ан тив, ҫакӑ ман сӑвӑран
Ун ҫине йӑпшӑнса хӗвел пӑхтӑр.

Ҫӑвашсен XX мӗш ӗмӗрти поеҫӗ **И. С.** Тукташ.
Акку 1907-мӗш ҫулта ҫуралнӑ.
(Сӑввине кӑҫалхи „Сунталӑн" 9-мӗш №-нҫен, 11-мӗш странитсӑран илнӗ.
Фӗт вилни ун ҫухне лапах 37 ҫул ҫитнӗ мӗн).

Кам камӑнне шӑхӑртвине вулакансем хӑйсемех сисеҫҫӗ пуҫ тесе шанатӑм. Вилнӗ ҫынсем ҫӗр̆леҫҫӗ-вӗт? Ҫавӑнпа, ку старик ҫапах сисес ҫук тенӗ ӗнтӗ литтератгурӑ вӑрри Тукташ.

Иеҫҫенинӑнне вӑрласа йӑлӑхрӑмӑр та, хаҫ ытгисене пуҫлама ҫерет ӗнтӗ! Да!

Симӗс Хырӑм.

---

# Тневник татӑкӗнҫен.

Епӗ кӑҫалхине Шупашкарта 5 ҫул слушит тӑвап ӗнтӗ. 5 ҫул хушшинҫе питӗ хытӑ улӑшрӑм. Халӗ н ӑс та, ҫи-пуҫ та йалти мар. Ҫийес ӗҫесрен те пилайӑх пурӑнӑтӑп.

Хваттер хуҫи майри ман сӗтел ҫине кашни ир п ҫутӑ сӑмавар лартса парӑ:—Пошалӑстӑ, Митрапн Феофанҫӑ, акӑ варенни, тет. Иалта мана никам Митраппан Феофанҫ, тесе ҫӗнекен ҫук. Пуртре Хӑхван Митрашки, теҫҫӗ. Мӗн тӑвас тен вӗсемпе—воҫттанни ҫук вӗт вӗсен.

Халӗ епӗ хаклӑ йышши перускӑсем туртатӑп. пуҫа йӑлтах анклийски хурӑм тӑхӑнатӑп. ттинкӑсем—„тшимми". Каҫсерен Шупашкарта пуҫра кайса икӗ хулла икӗ хӗр уртса туналатӑп Шалу сен, пивнойа кӗрсе коркоп опоротне вӑйлататӑп. Тем ен те хулара пурӑнма лайӑхах... Пайанхи хаҫатра те ҫинҫен тахӑшне кулак тесе ҫырнӑ. Ах, йӗкӗ̆ксем!.

Уҫрештенирен икӗ ернеллӗх отпӑск илсе епӗ киле лтӗм. Епӗ килнӗшӗн аттесем, лишшентсӑсем пулин те алама ҫук хӗпӗртесе карӗҫ. Атте тулта пылҫӑк йанӑине пӑхмӑсӑрах урисене ҫӑмат тӑхӑнса лартрӗ, мӑксем шӑрҫа пуҫлӑ ҫӑпата сырҫӗҫ, анне пӗлтӗрхи ırттава ӑшаласа паҫӗ. Ҫемйепе сӗтел тавра ларса р витре сӑра ҫавӑрса хутӑмӑр.

Каҫпа атте:

— Пайан вырсарникун майӗпе ҫынсем урама туҫҫӗ пулӗ, кайса килсем, терӗ.

Карӑм. Урам кӗтессинҫе старикосем халаплавса лараҫҫӗ. Старик семпе ман сӑмах йумах ҫук—утрӑм малалла.

Тепӗр ҫӗрте хӗрсем. Епӗ кайнӑ ҫул ҫара уран, ҫӗтӗк кипкесемпе ҫупса ҫӳрене хӗрсем питӗ илемленсе кайнӑ. Пуриӗҫен ытла Мавҫӑм муҫисен Хӗветлийӗ илемлӗ. Ех!.. Хӗр мар, конфеткӑ! Хулари хӗрсенҫен вунӑ хут мала. Епӗ Хветлийе ыравах илсе йама хатӗр. Вӑл каҫҫа тухсан, епӗ Шупашкара та кайас ҫук. Анҫах... анҫах, анҫах... Калама та намӑс. Ҫывсем салавсан епӗ Хветлипе йунашар ларнӑ ҫух, ӑна хам ҫунӑма уҫса кӑтартрӑм та, вӑл мана: кай, кулак аҫи! Сирӗнешкелли вумай ман ҫумра, терӗ. Иалта манӑшкали тупа та епӗ анҫах, суйӑт вӑл. Иалта камӑн тӑхӑнмалли „тройккӑ", „тшимми" пур-ха? Никамӑн та ҫук.

Сӑмахпа каланипе Хветлийа ӗнентерес ҫук тесе, ыталаса илтӗм те...

Хветли вӑрт вӗҫерӗнсе ман пит ҫине лаҫ сурҫӗ те, пӗр саманра киле кӗрсе ҫукалҫ. Намӑс, намӑ! Хулари хӗрсем пӗлсен, сурма мар тем тӑвӗҫ. Тур усалла ката сирех!..

Фррр! Ыран ҫисткӑ... Килтисемпе ҫыхӑну пулман тес пулӑт... Ах, отпӑсксемех пӗтереҫҫӗҫке пире уҫрештенире ӗҫлекенсене! Атте кулакне пӗлекенсем кӗҫӗрех вилсе пӗтсен пит аван пулӗҫҫӗ...

Митраппан Феофанҫ.
Тневника Р—и тупнӑ.

**Пĕтĕм Совет Сойусĕнђи хут пĕлекен ђăвашсем!**

Тăрăхласа култаракан, кулăш урлă ăс паракан пахаран та паха

# КАПКĂН

**шурнала
çырăнманни
килĕшмест.**

*„Капкăнра" илемлĕ кулăш калавĕсем, сăвăсем, такмаксем, пĕђĕк кометисем, вак-тĕвексем çапăнаççĕ.*

*„Капкăнра" тухакан карттинсем тĕрлĕрен сăрсемпе сăрланса тухаççĕ.*

Кашни пуштă уйрăмĕнђех, кашни пуштă акĕн.твинђех ăна çырăнс. илме пулаť. Пиçмонос сэсем те потпискă йышăнаççĕ

**ИЛМЕЛЛИ ХАКĔ:**

Çулталăка 1 тен, çур çуллăха 55 пус, 3 уйăха 30 п.,

**РЕТАКСИПЕ КАНТУР АТРĔСĔ:**

*ЧЕБОКСАРЫ, КАНАШСКАЯ, 15. ИЗДАТЕЛЬСТВО „КАНАШ".*

# ВУЛАКАНСЕНЕ

ТУТЛĂ ÇИСЕН ХЫÇАЛТАН ЙŬÇÇИНЕ ÇИМЕÇÇĔ ТЕÇÇĔ.

„Капкăнпа" пĕрле ытти хаçатсене те вуламалла

**Çак номĕре илсенех—Самара крайотделение Центроиздата—çапла атрĕспе мана хисепе хурса, савса**

САМАРТИ çĕнĕ ХАÇАТА

# ХĔРЛĔ ЙАЛАВ

**ÇАВ
КУННЕХ
ÇЫРĂНСА
ИЛĔР!**

Илнине пĕлтерĕр (об исполнении донесите — тет пŭрократ. Епĕ пŭрократ мар) хăр йађейккăра, йалсоветне, т. ытти пĕлтерĕр

**ХАКĔ УКÇАРАН та ЙŬН—**

**Çулталăка 1 т. 20 п., çур çула 60 пус, 3 уйăха-30 пус, 1 уйăха--10 пус.**

**„ХĔРЛĔ ЙАЛАВ"**


## ТĔРĔС МАР.

Епĕ, Çĕнĕ-Ахпŭртри шкул пуçлăхĕ Илйе Макарђ çакна çырса пĕлтерес терĕм. Ман çине йалти комсомолĕссемпе парттийтсăсем ним пĕлмесĕрех наступаť тăва пуçларĕç. Хамăн ман нимех те айăп çук. Итлĕр, ĕç мĕнле пулђĕха? Мана опђă ĕçне хутшăнмастăн тесе айăплаççĕ, мĕнлеха вара опђă ĕçне хутшăнмастăп. Тăвансем, хурăнташсем ĕçкĕ çикĕ тусан, епĕ нихçан та йулман, унта пŭрт туллийех çын пулаççĕ, унтах калаçатпăр, йурлатпăр, шапăлтататпăр. Ун пек опђă ĕçне хушăнмасăр нихăçан та йулман.

Ие тата тепĕр пример. Кăçал тырă хатĕрлес кампанире мана 15 пăт тырă тŭлеттермелле тунă. Мĕн пăхса тăмалли пур. Тытрăм та çыртăм сайавлени. Мана тырă тŭлеттермелле ан тăвăр, терĕм. Мана кура, ман хыççăн йалти «ырă çынсем» пурте сайавлени çырса пара пуçларĕç. Ку мĕн вара? Опђă ĕçĕнђе пример кăтартса массăна хам хыççăн йертсе пыни пулмасти вара?

Кăçал пирĕн шкул пахђинђе улма питĕ лайăх пулђĕ. Аçта хурас пулаť тесе шухăшлатпăр йуратнă маткапа иксĕмĕр. Мĕн нумай шухăшласа тăмалла пур терĕм. Карташĕнђи тăвата сысна кашкăрсем пек ĕрĕхсе çŭреççĕ. Лайăх çитерсен 5—6-шар пăт туртма пултараççĕ. Кăларатпăр та йаратпăр. Çапла хайхи ман тăвата «кашкăр» пĕр 50 пăт улмана тирпейлесе те хуђĕç. Вăл виђово та халĕ, хай, шуйтансем, çитсе актă çырса та карĕç. Мана «вредителђ» тесе йат параççĕ.

Епĕ «вретитĕл» пулма саранђа мар вĕт. Егем хырăм выççан çимесĕр пурăнма пултараймасť, ман сыснасем те хам çумрах улма пахђи пур çĕрте йепле çăварĕсене карса выçă ларђăрха. Пета, веçех аптăрарăм ĕнтĕ, çăвăнпа аптăранă йенне ман хуга кĕрсе статйа çырма ыйтатăп. Çырмасассăн кăрavул! тесе кăшкăрма тытăнăп.

Илйе Макарђ.

Илйе Макар ал пусни тĕрĕс: „Çăмăл кăвалерис".



Кулак аҫисем суйлав прави илесшӗн
ашшӗсенҫен уйӑрӑлвӑ пекки тӑваҫҫӗ.

ЕСҪЕН. Мунҫа тӑватӑни? КУЛАК. Мунҫа мар, пӳрт лартатӑп.
ӗрлатӑп та уйӑрлатӑп, тет иӗксӗк. ХРЕСҪЕН. Кам? КУЛАК.
ам. ХРЕСҪЕН. Хӑшӗ? КУЛАК. Амӗш аллинҫи.

Ответлӑ ретактӑр А Ваҫҫилӗв.

Гор. Чебоксары, тип. «Чув. Книга» Чувашлит № 2166